28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
ИЮНЬ
1
ЭРНЕКУН
114(6855) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ХИСЕП ХĂМИ

Ĕççынни депутачĕсен Çĕрпӳ райсовечĕн исполкомĕпе ВКП(б) райкомĕ тăратнă тăрăх, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне ăнăçлă тултарнăшăн тата выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ӳстернĕшĕн малта пыракан çак колхозсене республикăри ХИСЕП ХĂМИ çине кĕртнĕ:

7. **«Сталинец» колхоз** (председателĕ **Г. З. Захаров** юлташ, ферма заведующийĕ **Васильев** юлташ, колхозра лаша ĕрчетес ĕçĕн заведующийĕ **Лаврентьев** юлташ) выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне лашасем енĕпе 100 процент, майракаллă шултра выльăхсем енĕпе 100 процент, сыснасем енĕпе 166 процент, сурăхсем енĕпе 171 процент тултарнă. Государствăна çур çулшăн аш-какай, сĕт тата çăмарта парса татнă.

8. **«Луч» колхоз** (председателĕ **П. Николаев** юлташ, ферма заведующийĕ **Грачев** юлташ) выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне лашасем енĕпе 100 процент, майракаллă шултра выльăхсем енĕпе 140 процент, сыснасем енĕпе 112 процент, сурăхсем енĕпе 141 процент тултарнă. Государствăна çулталăкшăн аш-какай, çур çулшăн сĕтпе çăмарта парса татнă. Кăçал çуралнă çамрăк выльăхсене пĕтĕмпех сыхласа хăварнă.

9. **«Ĕмĕт» колхоз** (председателĕ **Николаев** юлташ, колхозра лаша ĕрчетес ĕçĕн заведующийĕ **Егоров** юлташ, ферма заведующийĕ **Грачев** юлташ) выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне лашасем енĕпе 103 процент, майракаллă шултра выльăхсем енĕпе 118 процент, сыснасем енĕпе 100 процент, сурăхсен енĕпе 129 процент тултарнă. Государствăна аш-какай памалли çулталăкри плана 76 процент, сĕт памалли плана 100 процент тата çăмарта памалли плана 65 процент тултарнă.

10. **«Дружба» колхоз** (председателĕ **О. Т. Тимофеев** юлташ, ферма заведующийĕ **Н. А. Алексеев** юлташ) выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне лашасем енĕпе 100 процент, майракаллă шултра выльăхсем енĕпе 144 процент, сыснасем енĕпе 145 процент, сурăхсем енĕпе 162 процент тултарнă. Государствăна çур çулшăн выльăх-чĕрлĕх продукцине пĕтĕмпех парса татнă.

11. **«Балтиец» колхоз** (председателĕ **И. Васильев** юлташ, ферма заведующийĕ **Антонова** юлташ) выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне лашасем енĕпе 100 процент, майракаллă шултра выльăхсем енĕпе 103 процент, сыснасем енĕпе 111 процент, сурăхсем енĕпе 115 процент тултарнă. Государствăна çулталăкшăн сĕт, çур çулшăн аш-какайпа çăмарта парса татнă. Кăçал çуралнă çамрăк выльăхсене пĕтĕмпех сыхласа хăварнă.

12. **«Пионер» колхоз** (председателĕ **Ф. О. Федоров** юлташ, ферма заведующийĕ **Е. Н. Никитина** юлташ, колхозра лаша ĕрчетес ĕçĕн заведующийĕ **Н. К. Кузьмин** юлташ) выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне лашасем енĕпе 105 процент, майракаллă шултра выльăхсем енĕпе 108 процент, сыснасем енĕпе 132 процент, сурăхсем енĕпе 135 процент тултарнă. Государствăна çур çулшăн выльăх-чĕрлĕх продукцине парса татнă.

13. **«Красные Тиуши» колхоз** (председателĕ **В. М. Михайлов** юлташ, участокри зоотехник **И. И. Илларионов** юлташ) выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне лашасем енĕпе 100 процент, майракаллă шултра выльăхсем енĕпе 100 процент, сыснасем енĕпе 100 процент, сурăхсем енĕпе 129 процент тултарнă. Государствăна çур çулшăн аш-какай, сĕт, çăмарта парса татнă.

14. **«Богатырь» колхоз** (председателĕ **В. Т. Трофимов** юлташ, ферма заведующийĕ **О. И. Ельмакова** юлташ) выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне лашасем енĕпе 100 процент, майракаллă шултра выльăхсем енĕпе 100 процент, сыснасем енĕпе 125 процент, сурăхсем енĕпе 133 процент тултарнă. Государствăна çур çулшăн выльăх-чĕрлĕх продукцине парса татнă.

15. **«Первое мая» колхоз** (председателĕ **Г. Евгеньев** юлташ, ферма заведующийĕ **Т. Алексеева** юлташ) выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне майракаллă шултра выльăхсем енĕпе 115 процент, сыснасем енĕпе 120 процент, сурăхсем енĕпе 154 процент тултарнă. Государствăна çулталăкшăн выльăх-чĕрлĕх продукцине парса татнă.

Чкаловски район çураки планне тултарчĕ

ЧКАЛОВСКОЕ. (ТЕЛЕГРАФПА). Майăн 30-мĕшĕ тĕлне Чкаловски районри колхозсем çураки планне тултарчĕç. План тăрăх 11.800 гектар акмалла пулнă пулсан, 11.827 гектар акнă. Планран иртте рсе акас ĕç малалла та пырать.

ВКП(б) райкомĕн секретарĕ НИКИТИН,
Райисполком председателĕ ГЕРАСИМОВ,
Районри çĕрĕç пайĕн заведующийĕ АХСЯНОВ.

Етĕрне районĕ выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана тултарнă

ЕТĔРНЕ, майăн 31-мĕшĕ. (ТЕЛЕГРАФ ПА). Республика 25 çул тултарнин уявне хатĕрленсе илнĕ обязательствăна пурнăçласа, Етĕрне районĕнчи колхозсем майăн 31-мĕшĕ тĕлне выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государственнăй плана лашасем енĕпе 100,4 процент, майракаллă шултра выльăхсем енĕпе 102 процент, сыснасем енĕпе 101 процент, сурăхсем енĕпе 136 процент тултарчĕç.

Кашни колхоз тăрăх пур выльăхсем енĕпе те плана тултарассишĕн тата государствăна обязательство тăрăх выльăх-чĕрлĕх продукцийĕ парса татассишĕн тăрăшса ĕçлетпĕр.

ВКП(б) райкомĕн секретарĕ СОМОВ,
Райисполком председателĕ ХРОМОВ,
Районри çĕрĕç пайĕн заведующийĕ ХМЕЛЕВ.

Выльăх-чĕрлĕх çурчĕсене юсаççĕ

ОКТЯБРЬСКОЕ, майăн 31-мĕшĕ. **(Телефонпа). Вăрмар районĕнчи «Красная Кубня» колхоз** членĕсен çыруне районри колхозсенче тĕплĕн сӳтсе-явса колхозниксем хăйсем çине конкретлă обязательствăсем илеççĕ. Тимошенко ячĕпе тăракан колхоз членĕсем (председателĕ П. Васильев юлташ) Чăваш республики 25 çул тултарнă тĕле выльăх-чĕрлĕх витисене пĕтĕмпех юсаса пĕтерме йышăнчĕç. Çак ĕçсене тумашкăн халĕ 25 кубометр йывăç хатĕрленĕ, ĕне витин çийне çĕнĕрен витнĕ, выльăх вити çывăхне икĕ тараса алтнă. Выльăх-чĕрлĕх витине вут-кăвартан сыхлас шутпа ятарласа тунă чана 500 витре шыв тултарса лартнă.

Унсăр пуçне, колхозра тырпул пухса кĕме те тимлĕн хатĕрленеççĕ: 3 жнейка, 1 косилка, 1 молотилка, 17 стан урапа юсаса, 120 çурла шăлласа хунă, çĕнĕрен 20 хăмăт хатĕрлеççĕ. Тырпул пухса кĕртнĕ вăхăтра урапасемпе машинăсене сĕрме çу, тикĕт хатĕрлеççĕ.

Н. АНДРЕЕВ.
(Хамăр корр.).

УЯВ ТĔЛНЕ ГОСУДАРСТВĂНА СĔТ ПАРСА ТАТАСШĂН

КАЛИНИНО, майăн 31-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Вăрмар районĕнчи «Красное Кубня», колхоз членĕсен çыруне кашни колхозрах сӳтсе-явса, государствăна выльăх-чĕрлĕх продукцийĕсем парас тĕлĕшпе конкретлă обязательствăсем йышăнаççĕ. «Первое мая» колхоз членĕсем государствăна обязательство тăрăх сĕт-çу памалли плана 70 процент, «Красноармеец» колхоз 55 процент, «Коминтерн» колхоз 40 процент тултарнă. Çак колхозсем июнь уйăхĕнче сĕт-çу тата çăм памалли плана пĕтĕмпех тултарма обязательство илнĕ.

Анчах та районра государствăна сĕт-çу парас тĕлĕшпе юлса пыракан колхозсем те пур-ха. «Комбайн», «Трактор», «Строитель», Мичурин ячĕпе тăракан колхозсем государствăна сĕт пама та тытăнман, çав вăхăтрах тĕрлĕ çĕре 400—500 литр сĕт салатнă.

Республика 25 çул тултарнă тĕле государствăна выльăх-чĕрлĕх продукцийĕсене парса татассишĕн кашни колхозах тăрăшса ĕçлемелле.

В. ЗАЙЦЕВ.

Учитель ĕçĕ — чыслă ĕç

Педагогика училищисемпе институчĕсене чи лайăх çамрăксене ярар

Часах вĕренӳ çулĕ пĕтет. VII-мĕш тата X-мĕш классенчен вĕренсе тухакан çамрăксем умне хăш шкула вĕренме кайса мĕнле професси суйласа илес ыйту тухса тăрать. Паллах, вĕсенчен нумайĕшсем мĕнле шкула вĕренме каяссине шухăшласа хунă ĕнтĕ. Вĕсем хушшинче учитель пулма ĕмĕтленекенсем те сахал мар. Вăл çамрăксене учителĕн хисеплĕ, пархатарлă ĕçĕ, лайăх пурнăç кĕтет. Учитель! Мĕн тери çывăх, мĕн тери хаклă çак сăмах кашни çыншăн. Учитель ăна ăслăлăха, Тăван çĕршыва, хамăр халăха чунтан юратма вĕрентнĕ. Учитель ăна ачаран пуçласа çамрăк вăхăта çити пăхса ӳстернĕ, пурнăç çулĕ çине тăма ăс-тăн панă. Учитель ĕçĕ пирĕн çĕршывра хисеплĕ, чыслă та мухтавлă.

Партипе правительство халăх учителĕ çине ленинла пăхма, сталинла пăхма вĕрентеççĕ. Шкулта нумай вăхăт тата лайăх ĕçленĕшĕн пирĕн республикăра 78 учителе орденсемпе медальсем парса тата 148 учителе Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотине парса наградăланă.

Пархатарлă та чыслă ĕçе пурнăçа кĕртсе пыма учительсене пулăшасси — партипе совет тата комсомол организацийĕсен кулленхи тивĕçĕ пулса тăрать.

Кăçал июнь тата сентябрь уйăхĕсем хушшинче Патăрьелĕнчи, Калининори, Канашри, Пăрачкаври, Çĕрпӳри, Етĕрнери педагогика училищисене тата Чăвашсен Государство Педагогика Институтне çĕнĕрен вĕренме илеççĕ. Учителĕн хисеплĕ те мухтавлă ĕçĕ çинчен лайăх ăнлантарса паман пирки, иртнĕ çулсенче çак училищĕсене вĕренме кĕрес текенсем çителĕксĕр пулнă. Комсомол организацийĕсем лайăх çамрăксене педагогика училищисемпе институчĕсене вĕренме ярас тĕлĕшпе нимех те туман. Паллах, çакă вăл комсомол ĕçĕнчи пысăк çитменлĕхсенчен пĕри пулса тăрать.

Çитес вĕренӳ çулĕнче педагогика тата учительсен институчĕсемпе педагогика училищисенче вĕренме чи лайăх çамрăксене кирлĕ чухлех тупса ярас ĕçе комсомол организацийĕсем çине хунă. Çав майпа VII-мĕш тата X-мĕш классенче вĕренсе тухакансене педагогика училищисемпе педагогика институчĕсене вĕренме каясси çинчен, совет учителĕн паха та мухтавлă профессийĕ çинчен ăнлантарса памалла. Çамрăксене педагогика училищисемпе институчĕсене вĕренме кайма хаваслантармалла. ВЛКСМ Шупашкар хула комитечĕпе комсомолăн Элĕк, Калинино райкомĕсем VII-мĕш тата X-мĕш классенче вĕренсе тухакансемпе ятарласа пухусем иртнерĕ. Вăл пухусенче паллă учительсемпе тĕл пулса калаçнă. Çак паха пуçарăва ытти районсенче те анлăн сарса пымалла.

ВЛКСМ Центральный Комитечĕ комсомолăн пур организацийĕсене те çак ĕçе халех тытăнма хушнă. Ку ĕç уйрăмăнах педагогика училищисем пур районсенче лайăх пулса пымалла. Ку районсенчи комсомолецсен педагогика училищисемпе институт директорĕсене çĕнĕ вĕренӳ çулне лайăх хатĕрленме пулăшмалла. Вĕренӳ çурчĕсене, общежитисене, столовăйсене юсаса йĕркелемелле. Вутă хатĕрлесе турттарма, вĕренӳре кирлĕ хатĕрсене тупса илме пулăшмалла. Вĕренме пынă студентсене пурăнма лайăх условисем туса парас тесе ĕçлемелле.

Кăçал VII-мĕш тата X-мĕш классенчен вĕренсе тухакан çамрăксенчен нумайĕшĕсем педагогика училищисемпе институчĕсене вĕренме кайччăр. Совет учителĕн хисеплĕ те чыслă ятне илме вĕренччĕр.

А. ТОКАРЕВ,
ВЛКСМ Обкомĕн шкулсем енĕпе ĕçлекен секретарĕ.

Пархатарлă професси

Вăтам шкултан вĕренсе тухакан çамрăксем умĕнче професси суйласа илес тĕлĕшпе пысăк ыйту тăрать. Вĕсене пирĕн çĕршыври пур тĕрлĕ ĕçсем те пĕр пекех килĕшеççĕ. Совет çĕршывĕнче кирек епле ĕçре те пултарулăхпа паттăрлăха кăтартма пулать. Пирĕн çĕршывра кашни çынăн ĕçне тивĕçлипе хакласа хисеплеççĕ.

Çамрăксене тĕрĕс воспитани парас тата вĕсене çитĕнсе аталанса пыма пулăшас ĕçре халăх учителĕ калама çук пысăк вырăн йышăнса тăрать. Учитель ачана малтанхи пĕлĕве парать, Тăван çĕршыва чунтан юратма вĕрентет. Учитель вĕренекен ача умĕнче ăслăлăх алăкне уçать, ăна пурнăç çулĕ çине тăма вĕрентет, унăн ăс-хакăлне тĕрĕс аталанса пыма пулăшать. Кашни çын хăйне вĕрентнĕ учителе ăшă кăмăлпа асăнса сума сăвать.

Халăх учителĕ шкул ачишĕн чи пысăк, нумай вĕреннĕ, тӳрĕ кăмăллă, ăслă та культурăллă çын пулса тăрать. Ача пур енчен те хăйĕн учителĕ пек пулма тăрăшать, унтан пример илсе вĕренет. Учитель Тăван çĕршыва юратма вĕрентнĕ çамрăк патриотсем Тăван çĕршыва, халăх ĕçне чун-чĕререн парăнса ĕçленине Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче паттăррăн çапăçнипе, тылра хастарлă ĕçленипе лайăх кăтартса пачĕç. Çавăнпа Хĕрлĕ Çар офицерĕсемпе боецĕсем Отечественнăй вăрçăра тунă çĕнтерӳсемпе, тылри çамрăксен пархатарлă ĕçĕсемпе совет учителĕ те тивĕçлипе мухтанса савăнма пултарать.

Пирĕн çĕршывра учитель ĕçне пысăка хурса хакласçĕ. Учительсене ĕçлеме, квалификаци ӳстерме кирлĕ пур условисене те туса панă. Малта пыракан нумай учительсене тава тивĕçлĕ учительсен ятне панă. Чи лайăххисенчен лайăххисене орденсемпе медальсем парса наградăланă.

Партипе правительство, совет халăхĕ учитель ĕçне çакăн пек хисеплени пире тата лайăхрах ĕçлеме хавхалантарать, çĕнĕ вăй-хăват хушать. Çакă вăл вăтам шкулсенчен вĕренсе тухакан нумай çамрăксене учитель ĕçне—пархатарлă профессие вĕренме хавхалантарать пулĕ, тетĕп эпĕ. Совет çамрăкĕсем умĕнче педагогика училищисемпе институчĕсен алăкĕсем уçă. Кăçал туллимар вăтам тата вăтам шкулсенчен вĕренсе тухакан çамрăксенчен нумайĕшĕ педагогика училищисемпе институчĕсене вĕренме кĕрсе, учителĕн пархатарлă ĕçне юратса вĕренессе шанма пулать.

Л. ДЕНИСОВА,
Чăваш АССР-ĕн тава тивĕçлĕ учителĕ-орденоносец.

ВЦСПС-па Çулйĕр Халăх Комиссариатĕнчэ

ВЦСПС-па Çулйĕр Халăх Комиссариачĕ 1945 çулхи пĕрремĕш кварталта тимĕртăмăр пухса памалли плана ăнăçлăн тултарнăшăн Канашри вагонсем юсакан завода Çулйĕр Халăх Комиссариачĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне тата 200.000 тенкĕ преми пама йышăннă.

Унпа пĕрлех завода апрель уйăхĕнчи производство программине ăнăçлăн тултарнăшăн Çулйĕр Халăх Комиссариачĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне тата иккĕмĕш преми памалла тунă.

Республикăри ялпосемпе лавкасене преми пани

ВЦСПС, СССР Суту-илӳ Халăх Комиссариачĕ тата СССР-па РСФСР Центросоюзĕ потребкоопераци организацийĕсемпе предприятийĕсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн 1945 çулхи 1-мĕш кварталти итогĕсене пăхса тухса, лайăх ĕçлекеннисене преми панă. Преми илме тивĕçлĕ пулнисем хушшинче пирĕн республикăри çак ялпосемпе магазинсем пур: Советски районри Мăн Ямаш ялповĕ (председателĕ Михайлов юлташ) иккĕмĕш преми—3.500 тенкĕ; Вăрмар районĕнчи Пинер ялповĕ (председателĕ Андреев юлташ) иккĕмĕш преми—3.000 тенкĕ; Кӳкеç ялповĕн Шĕнерпуçĕнчи лавки (заведующийĕ Рискова юлташ) пĕрремĕш премин—300 тенкĕ; Канаш районĕнчи Вăтапуç ялповĕн Карăклăри лавки (заведующийĕ Егоров юлташ) иккĕмĕш преми — 400 тенкĕ; Йĕпреç рабкопĕн магазинĕ (заведующийĕ Лещева юлташ) иккĕмĕш преми—400 тенкĕ тата Ишлей ялповĕн Мамкари лавкийĕ (заведующийĕ Ямутина юлташ) виççĕмĕш преми—150 тенкĕ.

Çирĕмкунлăха чылай колхозсем хутшăнчĕç

ЧУРАЧĂК, майăн 30-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Районри чылай колхозсем çулйĕр строительствин çирĕмкунлăхне хутшăнчĕç. Паянхи кун çул çинче 137 çын çуран, 129 çын лашапа ĕçлеççĕ. Чи малтанах государство çулне юсаса илемлетес ĕçе тытăнчĕç. Унсăр пуçне вырăнти çулсене те юсаса йĕркелеççĕ. Район центрĕнче çĕр купаласа кĕпер тунă çĕрте куллен 50—60 çын ĕçлет. Кунта пурĕ 2.500 кубометр çĕр чавса купаламалла. Халĕ ку ĕçĕн чĕрĕк пайне тунă.

Метикассипе Тĕрер ял Совечĕсен çывăхĕнче 3 кĕпер тума тытăннă. Шуркассипе Кăшнаруй хушшинче те çул юсас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ.

Районра çулйĕр строительстви валли кирлĕ йывăç материалсем кӳрсе килес ĕç çителĕксĕр пырать. Материалсем турттарма çитес кунсенчех 150 лав яма шутлатпăр.

И. СКВОРЦОВ,
Райсовет исполкомĕн председателĕ.

Пирĕн чаплă земляка, Отечественнăй вăрçăн паллă полководецĕсенчен пĕрне Боголюбов юлташа — мухтав!

Ӳкерчĕк çинче: Совет Союзĕн Геройĕ **А. Н. Боголюбов** генерал-полковник. Вăл Шупашкарта çуралса ӳснĕ. Унăн кăкăрне икĕ **Ленин** орденĕ, икĕ 1-мĕш степень **Суворов** орденĕ, виçĕ **Хĕрлĕ Ялав** орденĕ, 1-мĕш степень **Кутузов** орденĕ, 1-мĕш степень **Богдан Хмельницкий** орденĕ тата медальсем илемлетсе тăраççĕ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Генералсемпе офицерсене Совет Союзĕн Геройĕ ятне парасси çинчен

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пынă кĕрешӳ фронтĕнче Командовани панă боевой заданисене кăтартуллăн пурнăçа кĕртсе пынăшăн тата çавăн чухне çитĕнӳсем тунăшăн çак генералсемпе офицерсене, **Ленин** орденĕпе **«Ылттăн Çăлтăр»** медаль парса, **Совет Союзĕн Геройĕ** ятне парас:

1. Генерал-полковника Александр Николаевич **Боголюбова**.
2. Гварди генерал-майорне Павел Порфирьевич **Брикеле**.
3. Гварди майорне Кузьма Евдокимович **Гребенника**.
4. **Генерал-майора Владимир Николаевич Джанджгавăна.**
5. **Гварди генерал-лейтенантне Николай** Сергеевич **Осликовские.**
6. **Танковăй çарсен гварди генерал**-лейтенантне Михаил Федорович **Панова.**
7. **Танковăй çарсен гварди генерал-лейтенантне Алексей Павлович Панфилова.**
8. **Артиллери генерал-полковникне** Александр Кузьмич **Сокольские.**
9. **Генерал-полковника Василий Иванович Трудолюбова.**

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1945 çулхи майăн 29-мĕшĕ.

Советлă Социализмлă Республикăсен Маршалне И. В. Сталин господина

Çак вăрçă хыççăн эпир паян пĕрремĕш хут ирĕклĕ Прага хулине кĕретпĕр. Сире, господин Маршал, Чехословаки республикин халăхĕ çĕнĕрен туртса илнĕ ирĕклĕхпе питĕ савăнни çинчен, вăл Совет Союзĕн халăхĕсене тата унăн Хĕрлĕ Çарне, çав тери пысăк ĕçсем туса пирĕн халăха ирĕке кăларма пулăшнăскерне, питĕ хытă тав туни çинчен пĕлтерме васкатăп.

Славянсен Российйине яланах чăн-чăн славянла туслăхпа юратса тăрса, эпир ырăс çарĕсен ĕмĕрхи чапĕпе йăлисене хастарлăн тытса пыракан Хĕрлĕ Çар çĕнтерессие пирки нихăçан та иккĕленмен.

Чи йывăр пусмăр вăхăтĕнче те чехсемпе словаксем сирĕн çывхарса пыракан çарăрсем çине никамран пытарса тăмасăр шанса тăчĕç. Çав çарсем ку таранччен тĕнче курман паттăрлăхпа инçери Атăлтан пуçласа Берлина çитиччен çул уçса пăчĕç, çапла вара пире те ирĕке кăларчĕç.

Пĕтĕм историри чи хаяр вăрçăн пĕтĕм йывăрлăхне совет халăхĕ хăйĕн тăван çĕршывне парăнса тата çав тери геройла чăтса тăни çине тата пĕтĕм Совет Союзĕ, паттăр Хĕрлĕ Çара мĕн кирлине пурне те парса тăрас тесе, пур промышленность отраслĕсенче те çав тери хавхаланса ĕçленине эпир питĕ хĕпĕртесе сăнаса пытăмăр.

Çак вăрçă историйĕнче икĕ пысăк ĕç, Совет Союзĕнчи вăрçă ĕçĕсемпе таччăн çыхăнса, пирĕншĕн паллă пулса юлаççĕ.

1943 çулта эпĕ Совет Союзне пытăм, вара эпир пĕр-пĕринпе союзлă пуласси çинчен килĕшӳ турăмăр, сирĕн çĕршывăрта хамăрăн çĕнĕ çара турăмăр. Иккĕмĕш хут эпир 1945 çулхи март уйăхĕнче тĕл пултăмăр, вара сирĕнпе пĕрле хамăра татăклăн ирĕке кăларас ĕçе хатĕрлесе çитертĕмĕр. Çапла вара пирĕн политика каллех тĕрĕсе тухрĕ, пирĕн славянла политика малалла епле пулса пырасси тӳрĕ çул çине тухрĕ.

Ку вăрçăри çав ĕçсене Прага хулинче нихăçан та манмĕç. Чехословаки республики, хăйĕн пĕтĕм халăхĕ сирĕн ĕпенсе тăнă тăрăх, пĕр-пĕринпе питĕ туслăн пурăнас çулпа малалла кайĕ, çав туслăха эпир вăрçă вăхăтĕнче турăмăр. Эпĕ çакна çирĕп шанатăп: мĕнпур союзлă государствăсемпе килĕшсе пырса, çав союз халăхсене телейлĕ пурнăç парĕ, пурте кĕтекен лăпкă пурнăç туса хума пулăшĕ, пысăк ирĕклĕх туса хурĕ.

Доктор Эдуард БЕНЕШ.

ПРАГА, 1945 çулхи майăн 16-мĕшĕ.

Эдуард Бенеш господина Чехословаки республикин Президентне

ПРАГА

Президент господин, ирĕке кăларнă Чехословаки столицине Прага хулине пырса вырнаçнă май Эсир ман пата янă туслă çырушăн эпĕ Сире тав тăватăп. Эпĕ сире хăвăра тата Чехословаки республикин тăванла халăхĕсене пĕтĕм чĕрекен ырă сунатăп.

И. СТАЛИН.

Совет Союзĕ инкĕслми вăй-хăват илсе тăракан çăлкуçĕ

Пирĕн Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне килсе тапăннă тăшмансене хирĕç Россия халăхĕсем хăйсен историллĕ вăрăм кунçулĕнче нумай кĕрешнĕ. Анчах пирĕн çĕршыври халăхсен ку тарана çитиччен нихăçан та хальхи вăрçăри фашистла Германи пек вăйлă та чее, опытлă тăшманпа хире-хирĕç тĕл пулма килмен.

Наполеон, Мускава тытса илме ĕмĕтленсе, Российăна 600.000 çынлă çарпа похода тухса килнĕ. 1914—1918 çулсенчи вăрçăра нимĕç империалисчĕсем Российăна хирĕç 1.500.000 салтак кăларса тăратнă. Халĕ фашистсем Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнче салтан та 3.000.000 салтак тытнă. ССР Союзне хирĕç вăрçнă çĕрте Германи хăй оккупациленĕ пĕтĕм Европăри çын резервĕсемпе тата производствăллă вăйсемпе усă курнă. Виçĕ çула яхăн Хĕрлĕ Çар, союзниксенчен кирлĕ пек пулăшу илсе тăмасăр, гитлерла Германие хирĕç пĕр пĕччен кĕрешнĕ.

Çаксем ĕнтĕ фашистла Германие хирĕç вăрçнă чухне Хĕрлĕ Çар умне мĕнле йывăрлăхсем тухса тăнине, Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче Хĕрлĕ Çар мĕнле паттăрла ĕç тунине çителĕклех кăтартса параççĕ. «Фашистла нимĕç вăрă-хурахĕсемпе вĕсен союзникĕсен урса кайнă бандисем çавăн пек хĕснине урăх нимĕнле çĕршыв та, нимĕнле çар та тÿссе тăма пултарайман пулĕччĕ, тесе шутлатăп эпĕ, — тенĕ Сталин юлташ Октябрьти социализмлă аслă революци 25 çул тултарни çинчен тунă докладра. — Çавăн пек хĕснине пирĕн Совет çĕршывĕ кăна, пирĕн Хĕрлĕ Çар кăна тÿссе тăма пултараççĕ. Тÿссе тăма кăна мар, ăна çĕнтерме те пултараççĕ».

Халĕ ĕнтĕ вăрçă пĕтрĕ. Гитлерла Германие аркатса тăкнă. Халĕ ĕнтĕ, тивĕçлипех, кашни хăйне çапла ыйту пама пултарать: мĕнле-ха вăл апла, çамрăк Совет государстви, кая юлнă, вăйсăр патша Российин ишĕлчĕкĕ çинче 25 çул каярах çеç пуçланса кайнăскер, вăйлă тăшман тапăннине тÿссе иртterме кăна мар, ăна аркатса тăкма та пултарчĕ?

Ют çĕршывсенчи хăшпĕр хаçатсенче— гитлерла Германие хирĕç вăрçнă чухне Совет Союзĕ хăйĕн халăх хисепĕ ытларах пулнă пирки тытăнса тăма пултарчĕ, тесе ăнлантарса параççĕ. Теприсем тата — Совет Союзĕн вăй-хăвачĕн çăлкуçĕ унăн анлă территорийĕ пулса тăрать, теççĕ. Анчах кусем те, лешсем те Совет Союзĕн вăй-хăвачĕ мĕнре пулнине тĕрĕс ăнлантарса параймаççĕ.

Паллах, ĕнтĕ, территори пысăкки, халăх шучĕ нумайăш, материальнăй ресурссем пысăк пулни—вăрçăра ăнăçусем тумашкăн паха япаласем пулса тăраççĕ. Анчах çапах та вĕсем çĕнтерÿ тума кирлĕ условисем çеç пулаççĕ, хăйсем халлĕн вĕсем çĕнтерÿ кÿмеççĕ-ха. Пирĕн çĕршыври вăй-хăватăн тĕп çăлкуçĕ — унăн социальнăй стройĕ, унăн государствăри, экономикăри тата обществăри йĕркисем пулса тăраççĕ. Российăра çĕр айĕнчи пуянлăхсем ялан пысăк пулни, Россия халăхĕсем ялан йышлă та паттăр пулни тахçанах пуриншĕн те паллă ĕнтĕ. Анчах та, Октябрьти социализмлă революцичченхи вăрçăсенче Россия сахал мар аяла пулнă. Сăлтавĕ унăн çакăнта пулнă: Российăра тăшмана çĕнтерес ĕçе пур майсемпе вăйсене те мобилизацилеме пултаракан социаллă-политикăллă строй пулман.

1917 çулхи октябрь уйăхĕнче Россия урăхла çĕршыв—социализмла çĕршыв пулса тăчĕ. Российăра помещиксемпе капиталистсен влаçĕ пĕтрĕ, ĕççыннисен влаçĕ пулса çирĕпленчĕ. Çĕнĕ социальнăй строй Совет государстви вăй-хăвачĕн ĕмĕрне курман вăйлă çăлкуçĕ пулса тăчĕ. «Октябрьти революци туса хунă социализмлă строй,—тенĕ. Сталин юлташ, —пирĕн халăха, пирĕн çара аслă тата никам çĕнтерейми вăй пачĕ».

1918—1920 çулсенчи Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнчех совет стройĕ хăйĕн пултарулăхне питĕ лайăх кăтартса пачĕ. Вăл вăхăтра Совет государстви аллинче пĕтĕм çĕршыв территорийĕн чĕрĕк пайĕ çеç юлнă пулин те, тырпул, хĕçпăшал, тумтир çителĕксĕр пулнă пулин те, союзниксем пулман пулин те, пĕтĕмĕшпе илсе каласан. Хĕрлĕ Çар та пулман пулин те (мĕншĕн тесен вăл ун чухне йĕркелеме çеç тытăннă),—Совет государстви çапах та, белогвардеецсемпе интервентсене аркатса тăкса, хамăрăн Тăван çĕршывăн никама пăхăнманлăхне капитализмлă 14 государство тапăннинчен сыхласа хăварчĕ.

«Рабочисемпе хресченсен ытларахĕш пайĕ, вĕсем хăйсен влаçне, Совет влаçне сыхлассишĕн, вĕсем хăйсене тата вĕсен ачисене культурăн мĕнпур ырлăхĕсемпе, этемлĕх ĕçĕ тунисемпе пуринпе те усă курма май паракан ĕçшĕн кĕрешнине ăнланса, туйса тата курса тăраççĕ пулсан, çак халăха вара нихăçан та çĕнтереймĕç» (Ленин).

Октябрьти социализмлă революци туса хунă совет стройĕн вăйĕпе хăвачĕ совет халăхĕ нимĕç фашисчĕсене хирĕç туса пынă Отечественнăй вăрçăра татах та туллинрех палăрчĕ. Ку вăрçă совет стройĕн çирĕплĕхне, вăл пурăнма пултарнине кăтартакан питĕ пысăк та йывăр тĕрĕслĕ пулса тăчĕ. Кирек епле государствăн та, кирек епле обществăн та тĕп никĕсĕ халăх пулса тăрать. Патша Российинче халăх пĕр-пĕринпе килĕштермесĕр, хирĕçсе пурăнакан классене уйăрăлса тăнă. Эксплоататорсем ĕççыннисене пусмăрланă, халăха таптаса пăчлантарса пынă, ăна çул паман, политикăллă правасемпе ирĕклĕхсем паман, чуралăхра тытса усранă. Çакă ĕнтĕ çĕршывăн тăшмана хирĕç кĕрешмелли вăйĕсене хавшатнă, çитменнине тата çĕнтерÿ ырлăхĕ те халăха мар, пусмăрлакансен аллине лекнĕ.

ССР Союзĕнче халĕ эксплоататорла классем çук. Рабочисем, колхозниксемпе совет интеллигенцийĕ социализмлă обществăн ĕççыннийĕсем пулса тăраççĕ. Çĕршыври пĕтĕм власть, пĕтĕм пуянлăх халăх аллинче тăрать. Пĕтĕм совет халăхĕн шухăш-кăмăлĕн политика тĕлĕшĕнчи ĕмĕрне курман пĕрлĕхĕ çакăн çинче никĕсленсе тăрать те ĕнтĕ. Гитлерла захватчиксем ССР Союзне килсе тапăннă чухне ĕççыннисен пĕрлĕхĕ арканса каясси çине, рабочисемпе хресченсем хушшинче хирĕçÿ пуçланса каясси çине шаннă. Чăннипе пачах та урăхла пулса тухрĕ: гитлерла захватчиксем пирĕн çĕршывра таччăн пĕтĕçсе пĕрлешнĕ, пĕр çын пек пулса тăнă халăха, тăшмана çав тери курайманскере, тĕл пулчĕç. Çĕршыв пĕрлĕхлĕ çар лагерĕ пулса тăчĕ. «Хĕрлĕ Çарăн тĕнчери пур çарсеннинчен те çирĕпрех те шанчăкларах тыл пур» (Сталин).

Патша Российинче нацисем пĕртан пулман, вĕсен пĕр-пĕрин хушшинче туслăх пулман, Россий халăхсен тĕрми пулнă. Пĕр наци тепĕр нацие пусмăрласа пурăннă, вĕсем хушшинче хирĕçÿсене, пĕр-пĕринпе тăшманла пурăнассине патша влаçĕ юриех çивĕчлентерсе пынă. Çаксем те ĕнтĕ Российăн тăшмансене хирĕç кĕрешмелли вăйĕсене хавшатнă. Совет влаçĕ наци ыйтăвне татса пачĕ. Ленинпа Сталин—Совет государствине тăвакансем—Российăри халăхсен çирĕп союзне туса хучĕç, çав союз халăхсем пĕр-пĕринпе пĕртан, харпăрхăй тĕллĕн, никама пăхăнмасăр пурăнмалли йĕрке çинче, нацисем пĕр-пĕрне хĕсĕрлессине пĕтерни çинче, нацисене аталанса пымашкăн ирĕк пани çинче никĕсленсе тăрать. Совет халăхĕсен Октябрьти революцире пуçланса кайнă тăванла туслăхĕ граждан вăрçинче тата социализм строительствинче ÿссе çирĕпленчĕ. ССР Союзĕ питĕ анлă территори йышăнса тăракан ирĕклĕ халăхсен нумай нациллĕ çĕршывĕ пулса тăчĕ. Фашизма хирĕç пынă вăрçăра халăхсен туслăхĕ Совет Союзне вăй-хăват парса тăракан инкĕслми çăлкуçĕ пулчĕ. ССР Союзĕнчи пур халăхсем те, аслă вырăс халăхĕ пуçпулса тăнипе, тăшмана çапса аркатас ĕçе хутшăнчĕç. «Пирĕн çĕршывра çирĕпленсе çитнĕ мĕнпур расăсемпе нацисен пĕртанлăх идеологийĕ, халăхсен туслăхĕн идеологийĕ гитлеровецсен тискер кайăкла национализмĕн тата расăллă курайманлăхĕн идеологине пĕтĕмĕшпех çĕнтерчĕ» (Сталин).

Совет Союз вăй-хăвачĕн çăлкуçĕ—пурнăç паракан хĕруллĕ совет патриотизмĕ пулса тăрать. Патша вăхăтĕнче халăхсем Тăван çĕршыва юратассине вĕсем патша Российи халăхсемшĕн «ама-çури амăшĕ» пулнине пĕлни, халăхăн анлă масси пусмăрлăхра, политикăллă правасемсĕр пурăнни, пуçпулса тăракан классем Российăна пĕтермелли национализмла политика тытса пынине пĕлни пăсса, кансĕрлесе пынă.

Совет Российинче патриотизм çĕнĕ вăй илчĕ. «Совет патриотизмĕн вăйĕ çакăнта пулса тăрать,—тенĕ Сталин юлташ,—вăл рассăллă е нациллĕ тĕшмĕшлĕхсем çинче мар, халăх хăйĕн советлă Тăван çĕршывне пĕтĕм чун-чĕререн парăнса, Тăван çĕршывшăн шанчăклă пулса тăни çинче, пирĕн çĕршыври мĕнпур нацисен ĕççыннийĕсем пĕр-пĕринпе тăванла та туслă пурăнни çинче никĕсленсе тăрать». Совет стройĕнче халăхăн нациллĕ традицийĕсем тата Совет Союзĕнчи мĕнпур ĕççыннисен пĕрлĕхлĕ пурнăç интересĕсем таччăн пĕтĕçсе тăраççĕ. Совет Союзĕнчи тĕрлĕ нацисен ĕççыннийĕсем хăйсен наци культури, хăйсен тăван чĕлхи тата историллĕ йăлисем социализмла строя тĕреклетсен çеç сыхлăнса юлса малалла аталанма пултарнине кураççĕ. Çакăн пирки те ĕнтĕ совет çыннисем хăйсен Тăван çĕршывне çав тери хĕруллĕн юратаççĕ. Совет патриотизмĕ совет çыннисене фронтра та, тылра та паттăрла ĕçсем тума вăй парса тăракан çăлкуçĕ пулса тăчĕ.

Революци хыççăнхи çулсенче пирĕн çĕршывăн культурăллă сăн-сăпачĕ тĕпренех улшăнчĕ. Октябрьти революциччен патша Российинчи халăх хут пĕлес тĕлĕшпе Европăра чи кайри вырăнсенчен пĕрне йышăнса тăнă. Кашни 4 çынран 3-шĕ хут пĕлмен. Патша правительстви халăха юри хут вĕрентмесĕр хăварнă, мĕншĕн тесен вăл хут пĕлмен халăха тытса тăма çăмăлрах, тесе шутланă. Совет çĕршывĕнче культурăллă революци пулса иртрĕ. Патша Российинче 91 аслă шкул пулнă, ССР Союзĕнче вăрçă пуçланас умĕн аслă шкулсен хисепĕ 700-е çитнĕ. Нациллĕ республикăсенче те халăха çутта кăларас ĕç чылай ÿсрĕ. Украинăра патша вăхăтĕнче 19 аслă шкул пулнă, халĕ унта 123 аслă шкул пур, Белоруссире ĕлĕк аслă шкул пĕрре те пулман, халĕ унта 23 аслă шкул пур. хаçатсем кăларас ĕç ÿснĕ, библиотекăсен, ăслăлăхпа тĕпчев институчĕсен хисепĕ ÿснĕ, хут пĕлменлĕхе пĕтерсе хунă.

Революци çулĕсенче пирĕн çĕршывра çĕнĕ, совет интеллигенцийĕ, çĕнĕлле ĕçлекен тата культура çулĕпе хăюллăн малалла пыракан интеллигенци/ совет халăхне питĕ паха изобретенисемпе открытисем паракан интеллигенци çитĕнчĕ. «Пирĕн çĕршывра,—тенĕ вырăссен паллă ученăйĕ И. П. Павлов,—наукăна туллин пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Çав тери туллин пурнăçа кĕртеççĕ!»

Совет Союзĕ культура тĕлĕшĕнчен патша Российипе пĕр шайра тăнă пулсан, Хĕрлĕ Çарăн хĕçпăшалĕ, унăн çар техники хальхи пек çав тери аван пулман пулĕччĕ, вĕсем фронта хальхи пек нумай пырса тăма пултарайман пулĕччĕ.

Совет Союзĕ фашистла Германие хирĕç кĕрешнĕ çĕрте социализмла экономика питĕ пысăк вырăн йышăнса тăчĕ. Патша Российин машинăсем, тракторсем, автомобильсемпе моторсем тăвакан хăйĕн промышленноçĕ пулман. Электричество, хими, çар промышленноçĕ пулман, 1914—1918 çулсенчи вăрçă вăхăтĕнче патша Российи çавăн пирки ĕнтĕ вырăс çарне çителĕклĕ таран хĕçпăшал парса тăрайман. Нимĕçсен çарĕнче кашни салтакăн 100 килограмм снаряд пулнă пулсан, вырăс çарĕнче вара пĕтĕмпе те 5 килограмм çеç, урăхла каласан, 20 хут сахалтарах пулнă.

Ленинпа Сталин тунă совет стройĕ, сталинла пилĕкçуллăхсем пирĕн çĕршыва хăватлă индустриллĕ çĕршыв туса хучĕç. «Вăйсăр, хăйне хăй хÿтĕлеме хатĕрленеймен çĕршывран,—тенĕ Сталин юлташ,—Совет Союзĕ хÿтĕленме пултарас тĕлĕшпе хăватлă çĕршыв, кирек епле кĕтмен çĕртен пулакан япаласене те тивĕçлипе кĕтсе илме хатĕр тăракан, тулашĕнчен тапăнас-тăвас пулсан, хăйне хÿтĕлеме кирлĕ хальхи вăхăтри пур тĕрлĕ хĕçпăшалсене те массăллăн туса кăларса унпа хăйĕн çарне хĕçпăшаллантарма пултаракан çĕршыв пулса тăчĕ».

Хĕвелтухăçĕнче промышленноçăн çĕнĕ центрĕсем, иккĕмĕш Баку, иккĕмĕш Донбасс туса лартнă, Уралта. Çĕпĕрте, Вăтам Азире, Казахстанра, Инçетри Хĕвелтухăçĕнче шултра промышленность районĕсем ÿссе çитĕнчĕç. Çĕршывра электростанцисем нумай туса лартнă. Çаксем пурте ĕнтĕ Совет Союзĕн вăрçăри вăй-хăватне ÿстермелли çирĕп никĕс пулса тăчĕç. Вăрçă кунĕсенче пирĕн çĕршыври предприятисенче тăшмана аркатма Хĕрлĕ Çара кирлĕ хĕçпăшала ывăнма пĕлмесĕр туптанă.

Патша Российинче çĕр уйрăм çынсен харпăрлăхĕ пулнă, çав никĕс çинче тытăнса тăнă çĕрĕçĕ те питĕ аялти пусăмра тăнă. Вуншар миллион вак хресченсем хăйсен хуçалăхне çав тери чухăн çĕр татăкĕсем çинче тытса пынă. Çавăн пек условисенче ĕнтĕ агрономи наукипе усă курма, тракторсемпе тата хальхи вăхăтри ытти çĕнĕ ялхуçалăх машинисемпе ĕçлеме май килмен. Çакна пула тырпул тухăçĕ пĕчĕккĕ пулнă, ялхуçалăхĕ сутмалăх продуктсем сахал туса кăларнă. Совет влаçĕ, коллективлă хуçалăха тĕп никĕсе хурса, ялхуçалăхне тĕпренех улăштарчĕ. Йывăç сухапуçне техника тĕлĕшĕнчен лайăхлатнă ялхуçалăх машинисем хĕссе кăларчĕç, яла агрономи науки пырса кĕрсе, унта ĕмĕрлĕхех çирĕпленсе ларчĕ. Çавна пула тырпул тухăçлăхĕ нумай ÿсрĕ, выçлăх çулсем пулас хăрушлăх хыçала тăрса юлчĕ, колхозсемпе совхозсем сутлăх продуктсем ытларах туса кăларма тытăнчĕç, халăхăн пурнăç условийĕсем лайăхланчĕç.

Фашизма хирĕç вăрçнă чухне колхоз стройĕ çав тери пысăк вырăн йышăнса тăчĕ. Ялти арçынсен ытларах пайĕ фронта тухса кайрĕ пулин те, тракторсен хисепĕ чакнă пулин те, вăрçăн малтанхи çулĕсенче Совет Союзĕн тухăçлă пысăк территорийĕ—Украина, Кубаньпе Дон таврашĕнчи облаçсем—çухалчĕç пулин те, пирĕн ялхуçалăхĕ хăй умне лартнă задачăсене питĕ ăнăçлăн татса пачĕ: вăл Хĕрлĕ Çара тата çĕршыва апат-çимĕç, промышленноçа чĕртавар ытлăн-çитлĕн парса тăчĕ. «Колхоз стройĕ пулман пулсан, колхозниксемпе колхозницăсем хăйсене хăйсем шеллемесĕр ĕçлемен пулсан, эпир çак йывăр задачăна татса парайман пулăттăмăр»,—тенĕ Сталин юлташ.

Совет промышленноçĕпе ялхуçалăхĕ, Совет государствин экономики тăшманла государствăсен экономикинчен танлаштарма çук хăватлăрах пулнă пирки, вăрçă вăхăтĕнчи условисенче хăйсем умне лартнă задачăсене ăнăçлăн татса пама пултарчĕç. Совет экономикин социализмлă йĕрки, производство хатĕрĕсем обществăн харпăрлăхĕ пулни, çынна çын эксплоатацилеменни, харпăрлăх тытакан уйрăм çынсен конкуренцийĕ çукки, совет хуçалăхне план тăрăх тытса пыни, —çаксем пурте ĕнтĕ çĕршыври экономикăллă мĕнпур ресурссене хăвăрт аталантарма тата вĕсемпе тĕрĕс усă курма май пачĕç. Промышленноçпа ялхуçалăхне малта пыракан наукăпа техникăн çитĕнĕвĕсене кĕртни хăватлă çар хуçалăхĕ туса хума май пачĕ. Çаксене пула ĕнтĕ Отечественнăй вăрçăн йывăр условийĕсенче совет хуçалăхĕ, патша Российĕн хуçалăхĕ иртнĕ тĕнче вăрçи вăхăтĕнче юханнă пек, Германин хуçалăхĕ ку вăрçăра юханнă пек, юханмарĕ, юханма мар, пачах та урăхла, çирĕпленчĕ те вăрçăран татах та вăйлăрах пулса тухрĕ.

Фашизма хирĕç кĕрешнĕ çĕрте Совет государстви çав тери пысăк ĕç турĕ. Классем хушшинчи ĕмĕрне килĕшме пултарайман хирĕçÿсенчен тата нацисем пĕр-пĕринпе тăшманла пурăнассинчен ирĕклĕ совет государстви, мĕнпур совет халăхĕ çине таянса тăракан совет государстви халăх массисен вăй-хăватне пĕтĕçтерсе, ăна тăшмана аркатнă çĕре мобилизацилесе тăракан питĕ хăватлă вăй пулса тăчĕ. Патша правительстви 1914—1918 çулсенчи вăрçăра парăнчĕ. Вăрçа хутшăннă çĕршывсенчен хăшĕ те пулин вăрçăран вăйлăланса тухни историре нихăçан та пулман. Совет государстви, экономикăна вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек урăхлатса йĕркелесе, промышленноçа эвакуацилесе, вăрçă хуçалăхне туса вăрçăн çав тери пысăк йывăрлăхсене çĕнтерчĕ çеç те мар,—вăрçă вăхăтĕнчех вăл вăйлăланчĕ, тата çирĕпрех пулса тăчĕ. «Совет государстви нихăçан та хальхи пек çирĕп те вăйлă пулман...» (Сталин).

Çакна ĕнтĕ Совет государстви—социализмлă государство мĕнпур совет халăхĕ çине таянса тăнă пирки тума май килчĕ. Совет государстви вăл—тĕнчери чи демократиллĕ государство.

Совет государствин системинче ертсе пыракан вăй—чи малта пыракан наукăллă мировоззренипе хĕçпăшалланнă большевиксен партийĕ пулса тăрать. Малта пыракан идейăсем, тесе вĕрентнĕ Маркс, массăсен ăс-тăнне хăйсен аллине илсен, материальнăй пысăк вăй пулса тăраççĕ. Çакăн пирки те ĕнтĕ большевиксен партийĕ, марксистла-ленинла теорипе хĕçпăшалланнăскер тата анлă массăсемпе çав тери таччăн çыхăнса тăраканскер, историллĕ çĕнтерÿсем турĕ. Большевиксен партийĕ ертсе пынипе, халăх Октябрьти Социализмлă революцие турĕ, Российăра социализм туса хучĕ тата историри питĕ кĕске вăхăтрах ССР Союзне малта пыракан индустриллĕ тата колхозлă çĕршыв туса хучĕ. Çĕршыва индустриализацилени, коллективизацилени, эксплоататорла классене пĕтерсе лартни, социализм туни пирĕн Тăван çĕршыва çăлса хăварчĕ.

Вăрçă кунĕсенче Ленин—Сталин партийĕ совет халăхне мухтавлă çĕнтерÿсем тума хавхалантараканĕ, организацилекенĕ пулса тăчĕ. Большевиксен партийĕ ертсе пынипе, совет халăхĕ паттăрла аслă ĕç турĕ—гитлерла Германие аркатса тăкрĕ.

Фашистла Германие хирĕç пынă кĕрешĕве Сталин юлташ—государствăпа политикăн чи аслă деятелĕ, чаплă полководец—ертсе пыни совет çыннисемшĕн питĕ пысăк савăнăç пулса тăрать. Мирлĕ строительство çулĕсенчех Сталин юлташ тăшмансем ССР Союзне тапăнма пултарассине шута илсе, пирĕн Тăван çĕршывăн çарпа экономика вăй-хăвачĕн никĕсне хывса хăварчĕ. Российăн патша правительствине аркатса тăкса тунă çав тери пысăк çĕнтерÿсем, совет халăхĕ социализмшăн кĕрешнĕ чухне тунă калама çук пысăк çитĕнÿсем Сталин ячĕпе çыхăнса тăраççĕ. Сталин юлташ совет халăхне мобилизаци тĕлĕшĕнчен ялан тата ывăна пĕлмесĕр хатĕр тытса усрарĕ. Вăл Хĕрлĕ Çара пăхса çитĕнтерчĕ, хальхи вăрçăн тактики çинчен çĕнĕ вĕрентÿ туса пачĕ, совет полководецĕсен кадрĕсене вĕрентсе хатĕрлерĕ. Отечественнăй вăрçăн чи йывăр та хăрушă тапхăрĕсенче, хăрушлăха нимĕнпе те сирсе яма çук пек туйăннă самантсенче, Сталин юлташ совет çыннисене хавхалантарса, пулăшса пычĕ, çĕнтерÿ патне каймалли çула кăтартса парса, пирĕн çынсене çĕнтерÿ патне ертсе пычĕ. Совет халăхĕ хăй Сталинпа пĕрле çĕнтерÿ тăвассине çирĕп шанса тăчĕ. Ку çакăн пек пулса тухрĕ те ĕнтĕ. Çамрăк совет государстви чее те вăйлă тăшман тапăннине тÿссе иртterчĕ кăна мар, вăл çав тăшмана аркатса та тăкрĕ.

Социализмлă совет стройĕ Отечественнăй вăрçăра хăй пурăнма пултарассине тата хăйĕн вăй-хăватне çав тери аслăн кăтартса пачĕ. Вăл совет халăхĕн вăй-хăвачĕн, Хĕрлĕ Çар вăй-хăвачĕн ĕмĕр инкĕслми çăлкуçĕ пулса тăчĕ. «Вăрçă урокĕсем çакăн çинчен калаççĕ: совет стройĕ çĕршыва мирлĕ строительство çулĕсенче экономикăпа культура тĕлĕшĕнчен çĕклес ĕçе организацилемелли чи лайăх форма кăна мар, вăрçă вăхăтĕнче тăшмана хирĕç тăма халăхăн мĕнпур вăйĕсене мобилизацилемелли чи лайăх форма та пулса тăчĕ» (Сталин).

Мĕнпур совет çыннисен задачи социализмлă совет стройне куç шăрçине сыхланă пек сыхласси, унăн политикăпа экономика тата çар тĕлĕшĕнчи вăй-хăватне малалла ÿстересси пулса тăрать. Совет çĕршывĕ хăватлă пулни пирĕн ирĕклĕхпе никама пăхăнманлăхăн, çирĕп те нумая пыракан мирлĕ тапхăрăн шанчăкĕ пулнине ялан асра тытмалла.

Ф. ОЛЕЩУК.

Германие оккупацилесе тăнă вăхăтра ĕçлекен Контроль Совечĕ

Союзлă державăсен правительствисем калаçса татăлнă тăрăх, çак кунсенче Германие оккупацилесе тăнă вăхăтра ĕçлекен Контроль Советне туса хураççĕ. Çав Контроль Совечĕ союзлă державăсен Германири чи аслă влаçĕ пулса тăрать. Çак Контроль Советне Совет Союзĕн, Великобританин, Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен тата Францин верховнăй командованийĕсен представителĕсем кĕреççĕ.

Советсен Верховнăй Главнокомандованийĕ енчен Контроль Советĕнче представитель пулса ĕçлеме Совет Союзĕн Германири оккупациллĕ çарĕсен Главнокомандующине Совет Союзĕн Маршалне Г. К. Жукова лартнă.

К. Е. Ворошилов Будапешта пынă

БУДАПЕШТ, майăн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Майăн 28-мĕшĕнче Будапешт хулине союзниксен Венгрири Контроль Комиссийĕн председателĕ Совет Союзĕн Маршалĕ К. Е. Ворошилов çитнĕ.

ЛОДЗЬ ХУЛИНЧИ УРАМА СТАЛИН МАРШАЛ ЯТНЕ ПАНĂ

ВАРШАВА, майăн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Лодзь хулинчи Халăх Совечĕ, Лодзь хулине фашистла нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнăшăн Хĕрлĕ Çара тав тăвас тесе, Лодзь хулинчи Тĕп урама Сталин Маршал урамĕ, Рокишински урама Хĕрлĕ Çар урамĕ тесе ят памалла тунă.

АМЕРИКА СЕНАТОРĔ ГИТЛЕРЛА ГЕРМАНИ ПУÇЛĂХĔСЕНЕ ХАЛЕХ СУД ТУМА ЫЙТАТЬ

НЬЮ-ЙОРК, майăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин Вашингтонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Иллинойс штатĕнчен суйланă сенатор-демократ Лукас сенатра сăмах тухса каланă. Вăл хăйĕн сăмахĕнче çапла каланă: Америка халăхĕ тĕнĕл держависен пуçлăхĕсене, вăл шутра Геринга, Деница тата фон Рундштедта халех суд тума пуçлама ыйтать. Ку ĕçре тытăнса тăмалла мар тата суд техники тĕлĕшпе те ĕçе тăсса пымалла мар. Лукас каланă тăрăх, Германин генеральнăй штабĕ те нацистсемпе пĕр танах айăплă.

РУМЫНСЕН ФАШИСТЛА 14 ЖУРНАЛИСТНЕ СУД ТУНИ

БУХАРЕСТ, майăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Майăн 30-мĕшĕнче Бухарестра румынсен фашистла 14 журналистне суд тума пуçлаççĕ. Вĕсене халăх трибуналĕ суд тăвать. Айăпланакансем çаксем: румынсен легионерла (фашистла) «Бума вестири» ятлă хаçачĕн директорĕ пулнă Григоре Манойлеску, «Универсул» хаçатăн главнăй директорĕ тата «Курьерул» хаçатăн редакторĕ пулнă Ромуус Сейшану, «Порунка времий» хаçатăн главнăй редакторĕ пулнă Прундени тата ыттисем те.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕН СУЯ УКÇАСЕМПЕ ДОКУМЕНТСЕМ ТУСА ТĂНĂ ФАБРИКИНЕ ТУПНĂ

ПАРИЖ, майăн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Францири радио çапла пĕлтерет: Майн çинчи Франкфурт хули çывăхĕнче, Заксенхаузен лагерĕнче, союзниксен çарĕсем гитлеровецсем хăй вăхăтĕнче суя укçасем, документсем, пичетсем т. ыт. те хатĕрлеме уçнă питĕ пысăк фабрикăна тупнă. Фабрикăра 140 çын ĕçленĕ. Унта пуринчен ытла ирĕксĕр мобилизацилесе лагере хупнă печатниксем—Франци, Бельги, Голланди, Норвеги тата Дани рабочийĕсем ĕçленĕ. Унта акăлчансен суя укçисене тата американецсен суя долларĕсене пичетленĕ. Гитлеровецсен çакăн пек план пулнă: Англипе Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсене суя хут укçасем нумай ярса тултарас та вĕсен экономикине хавшатас, тенĕ вĕсем.

ГИТЛЕРЛА ПРОПАГАНДИСТА ДЖОЙСА ТЫТСА ХУПНĂ

ЛОНДОН, майăн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: акăлчансен 2-мĕш армийĕн çарĕсем гитлерла пропагандиста Уильям Джойса тытса хупнă. Вăл Германире Англи валли паракан радиопередачăсенче туха-туха каланă. Ун чухне вăл хăйне хăй «лорд Хау-Хау» тенĕ. Джойспа пĕрле унăн арăмне те тытса хупнă.

Джойс Англи подданнăйĕ пулнă. Вăл Англие вăрçă пуçланиччен темиçе çул маларах Америкăран килнĕ. Вăл Англири Освальд Мосли ертсе пыракан фашистсен союзне хытă пулăшса тăнă. Вăрçă пуçланиччен темиçе кун маларах Джойс Германие тухса кайнă.

ФРАНКО БЕЛЬГИ ФАШИСЧĔСЕН ПУÇЛĂХНЕ ПЫТАРСА УСРАТЬ

ПАРИЖ, майăн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Парижри радио çапла пĕлтерет: Франко правительстви Бельги рексисчĕсен (фашисчĕсен) пуçлăхне Леон Дегреле пама килĕшмен. Бельги правительстви Дегреле пама ыйтнине хирĕç Франко правительстви çапла каланă: «Дегрель Испанире хăна пулса пурăнма пултарать», тенĕ.

ШУБАШИЧ ТРУМЭНПА ТĔЛ ПУЛНИ

ВАШИНГТОН, майăн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Югославин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен государство секретарĕн ĕçĕсене туса тăракан Грюпа пĕрле майăн 29-мĕшĕнче ирхине Трумэн президентпа калаçнă. Калаçу хыççăн Шубашичран журналистсем эсир Трумэнпа Триестри лару-тăру çинчен сÿтсе-явман-и? тесе ыйтнă. Шубашич—эпир тĕрлĕ ыйтусем çинчен калаçрăмăр, тенĕ. Малалли ыйтусем çине ответлесе, Шубашич çапла каланă: эпĕ часах кунтан Югославие тухса каятăп, тенĕ. Малалла вăл çапла каланă: Сан-Францискăри конференципе çыхăнса тăракан ыйтусем çинчен те калаçрăмăр эпир, тенĕ.

Корреспондентсем Шубашичран тата ытти ĕçсем çинчен те ыйтнă. Шубашич вара çапла каланă: Трумэн эпир тĕл пулса калаçни çинчен мĕн те пулин пĕлтерес тесен, вăл ун çинчен хăех каласа парĕ, тенĕ. Шубашич малалла çапла каланă: эпĕ кунтан тухса кайиччен Грюпа тата государство департаменчĕн ытти представителĕсемпе те калаçса илетĕп, тенĕ.

ТРИЕСТ ХУЛИНЧЕ ПУРНĂÇ ЙĔРКЕНЕ КĔРСЕ ПЫРАТЬ

БЕЛГРАД, майăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Белградри радио пĕлтернĕ тăрăх, Триест хулинче халăх влаçĕн органĕсем, Югослави çарĕ пулăшнипе, хулари пурнăçа йĕркене кĕртсе пыраççĕ, промышленность предприятийĕсемпе тĕрлĕ учрежденисене ĕçе яраççĕ. Хулара трамвай çÿреме пуçланă, электростанци тата водопровод ĕçлеççĕ. Суту-илÿ предприятийĕсем уçăлнă, шкулсем, кинотеатрсем, опера театрĕ ĕçлеççĕ, концертсем пулаççĕ. Радио тăрăх словен чĕлхипе тата итальянецсен чĕлхипе калаççĕ. Хула комендантчĕ, Триестри ирĕклĕх комитечĕн представителĕсемпе пĕрле, йывăр промышленность предприятийĕсене ĕçе яма тăрăшать.

ТИТО МАРШАЛ ЛЮБЛЯНА ХУЛИНЕ ПЫНĂ

БЕЛГРАД, майăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Майăн 26-мĕшĕнче Тито маршал Хебранг министрпа, Александр Ранкович генерал-лейтенантпа, Пеко Дапчевич генерал-лейтенантпа, Петр Драпшин генерал-лейтенантпа тата ытти çынсемпе пĕрле Любляна хулине пынă. Югославин Федерацийĕнче тăракан Словенин тĕп хулинчи халăх Тито маршала питĕ ăшшăн кĕтсе илнĕ. Тито маршал килнипе хавасланса пулса иртнĕ манифестацире 120.000 çын ытла пулнă. Манифестацие пухăннă халăх умĕнче Тито маршал сăмах тухса каланă. Любляна хулине Загреб хулинчен пынă май, Тито маршал хăйĕн тăван ялне Кумровеца кĕрсе тухнă.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

АМЕРИКА АВИАЦИЙĔ ИОКОГАМА ХУЛИНЕ ЙЫШЛĂН ВĔÇСЕ КАЙСА ТАПĂННĂ

ВАШИНГТОН, майăн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: майăн 29-мĕшĕнче американецсен Мариан утравĕсем çинчи «Вĕçекен крепость» йышши хăватлăран та хăватлă бомбардировщикĕсен питĕ пысăк соединенийĕ Японин портлă Иокогама хулине тапăннă.

Авиацин ытти соединенийĕсем Сакисима утравĕ çине тата Токио хулинчен 30 миля çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре ларакан Касумигаур хулинчи тинĕс-çар базипе авиаци бази çине бомбăсем пăрахнă.

ТОКИО, майăн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Домей Цусин агентстви пĕлтернĕ тăрăх, майăн 29-мĕшĕнче американецсен «Б-29» йышши хăватлăран та хăватлă 500 бомбардировщикне яхăн, 100 истребителе яхăн хÿтĕлесе пынипе, Иокогама хулипе Кавасаки хулине тапăннă. Тапăну сехет çурă пынă. Бомбардировщиксем пуринчен ытла вут тивертекен бомбăсем пăрахнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—89, секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—97, промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 3—?9, издательство конторин — 0—23.

НТ 00351 ...графия № 1 ... полиграфпромышленности ... ЧАССР ... № 2. Тираж 16.0..